Олимпиада-2002

# Лайăх паллăсем илер!



(Пуçл. 1-мĕш стр.)

Олимпиадăна пурĕ 51 ача хутшăнчĕ. Вĕсем çак районсенчен: Аксу, Алексеевски, Апас, Элкел, Çĕпрел, Çарăмсан, Çĕнĕ Шуçăм, Павлă, Пĕкĕлме, Пăва, Кайпăç, Лениногорск, Течĕ, Чистай, Нурлат тата хуласенчен: Анат Кама, Çырчалли. IX, X, XI классенче вĕренекенсенчен улттăшĕ вырăс шкулĕсенчен, 45-шĕ чăваш шкулĕсенчен килнĕ.

Ачасене чăваш чĕлхипе тата литературипе çыхăннă ĕçсем сĕннĕ. Вĕсенчен ытларахăшĕ чăваш чĕлхипе панă ĕçсене ăнăçлăрах пурнăçланă. Уйрăмах синтаксис ыйтăвĕсенче йăнăш сахалтарах. Нумайăшĕ предложени тĕсĕсене тата çыхăну хатĕрĕсене тĕрĕс палăртаççĕ. Анчах хăшĕсем пăхăнуллă предложени тĕсĕсене уçăмламаççĕ. Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисенче чарăну паллисем лартасси аван пулса пырать. Çав вăхăтрах ĕçсенче çитменлĕхсем те пур: морфема тишкерĕвне тума аптрани, сăмах пулăвĕн тишкерĕвне пĕлменни (пĕрремĕшле, иккĕмĕшле сăмахсем ăнлавсене уçăмлаймаççĕ). Морфологипе çыхăннă ыйтусене хуравланă чухне те ачасенчен чылайăшĕ йăнăшсем яраççĕ: хăй пĕлтерĕшлĕ пуплев пайĕсене ушкăнлама пĕлмеççĕ, вырăс чĕлхинчен кĕнĕ япала ячĕсене тĕрĕс вĕçлеймеççĕ, камăнлăх формин аффиксĕсене кăтартаймаççĕ. Çавăн пекех глаголсене кирлĕ формăра (наклонени, вăхăт, сăпат) лартнă чух çухалса каяççĕ.

Фонетикăпа çыхăннă йăнăшсем ĕçсенче сахалтарах. Ачасем сасăсене пахаланă чухне йăнăшмаççĕ, анчах та хăшĕсем сасă, сас палли ăнлавсене пăтраштараççĕ.

Чăваш литературипе çыхăннă ыйтусен хуравĕсенчен çакă палăрчĕ: ачасем литература терминĕсене ăнлансах каймаççĕ, хайлавăн тĕп шухăшĕпе темине палăртма йывăрланаççĕ. Чылайăшĕн ĕçĕнче темăпа тĕп шухăша палăртас вырăнне хайлавăн содержанине каласа кайнă. Сăнарлăх хатĕрĕсене палăртасси те хăшĕсемшĕн йывăрлăх. Сочинени-рецензие кирлĕ пек йĕркеленисен шучĕ сахал. Вĕсенчен çаксене палăртмалла: IX класс — Анастасия Токсарова (Кайпăç районĕ), Венера Кузнецова (Аксу), Ирина Яковлева (Çĕпрел), X класс — Марина Чалина (Çарăмсан), Инга Новая (Çĕпрел), XI класс — Надежда Никитина (Çĕнĕ Шуçăм). Çак ачасен ĕçĕсене сочинени теме пулать. Хаклани те уçăмлă, хăйсен шухăшне те аван палăртнă. Ыттисем вара рецензие сĕннĕ ыйтусене хуравланă евĕр кăна йĕркеленĕ.

Тĕпрен илсен, асăннă çитменлĕхсене пăхмасăрах олимпиада пĕтĕмлетĕвĕсене аван темелле. Ачасем тăрăшса ĕçлесçĕ, хавхалану пур. 2001 çулхипе танлаштарсан, çитĕнӳсем курăмлăн палăраççĕ.

Анат Камăпа Çырчалли хулисен вĕренекенĕсем валли ыйтусене урăхларах йĕркеленĕ. Чăваш гимназийĕпе 36 номерлĕ шкулта чăваш чĕлхине ют çĕршыв чĕлхи пек вĕренекен ачасен ĕçĕсенче те ӳсĕм сисĕнет. Малашне олимпиадăра хула ачисем те ял вĕренекенĕсем тăвакан ĕçсене пурнăçласса шанса тăратпăр.

Жюри тĕрĕслесе хак панă ĕçсем тăрăх вырăнсене çаплараx палăртрĕ. Чăваш чĕлхи тата литературипе ирттернĕ республикăри V олимпиадăна лайăх хатĕрленнĕшĕн ТР вĕрентӳ министерствин грамотине тата асăнмалăх парнене Апас районĕнчи Азбаба шкулĕн 9-мĕш класс вĕренекенĕ Анастасия Петрова, Пăва районĕнчи Тури Лащи шкулĕн 10-мĕш класс вĕренекенĕ Анна Казакова, Элкел районĕнчи Кивĕ Тахтал шкулĕн 11-мĕш класс вĕренекенĕ Марина Абасева тивĕçрĕç.



*Виççĕмĕш вырăн:* Çарăмсан районĕнчи Акрель шкулĕн 9-мĕш класс вĕренекенĕ Надежда Трофимова, Течĕ районĕнчи Кăнна Кушки шкулĕн 10-мĕш класс вĕренекенĕ Наталья Пыркина, Аксу районĕнчи Савгачевăри чăваш гимназийĕн 11-мĕш класс вĕренекенĕ Анна Анисимова.

*Иккĕмĕш вырăн:* Элкел районĕнчи Кивĕ Тахтал шкулĕн 9-мĕш класс вĕренекенĕ Людмила Старшова тата Çырчаллинчи 36 номерлĕ шкулăн 9-мĕш класс вĕренекенĕ Юлия Долгинова, Çĕпрел районĕнчи Хулаçырми шкулĕн 10-мĕш класс вĕренекенĕ Инга Новая тата Çырчаллинчи 36 номерлĕ шкулăн 10-мĕш класс вĕренекенĕ Валентина Иванова, Çарăмсан районĕнчи Акрель шкулĕн 11-мĕш класс вĕренекенĕ Надежда Карпова тата Çырчаллинчи 36 номерлĕ шкулăн 11-мĕш класс вĕренекенĕ Татьяна Краснова.

*Пĕрремĕш вырăн:* Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмел шкулĕн 9-мĕш класс вĕренекенĕ Екатерина Яковлева тата Анат Камăри чăваш гимназийĕн 9-мĕш класс вĕренекенĕ Евгения Меченко, Çарăмсан районĕнчи Акрель шкулĕн 10-мĕш класс вĕренекенĕ Мария Чалина тата Анат Камăри чăваш гимназийĕн 10-мĕш класс вĕренекенĕ Надежда Петрова, Çĕнĕ Шуçăм районĕнчи Чăваш Шупашкар шкулĕн 11-мĕш класс вĕренекенĕ Надежда Никитина тата Анат Камăри чăваш гимназийĕн 10-мĕш класс (11-мĕш класс ĕçне пурнăçласа) вĕренекенĕ Мария Мучейкина.

Асăннă вĕренекенсем Вĕрентӳ министерствин грамотисене тата хаклă парнесене тивĕçрĕç.

***Районсем хушшинче вырăнсем çапларах пайланчĕç:*** 1. Çарăмсан; 2. Çĕпрел; 3. Элкел; 4. Аксу; 5. Течĕ; 6. Лениногорск; 7. Нурлат; 8. Çĕнĕ Шуçăм; 9. Алексеевски; 10. Пăва; 11. Чистай; 12. Кайпăç; 13. Апас; 14. Пĕкĕлме; 15. Павлă.

***Хуласем хушшинче:*** 1. Анат Кама; 2. Çырчалли.

**Константин МАЛЫШЕВ.**
**Сăнӳкерчĕксенче: Н.З. Несмелова; çĕнтерӳçĕсене чысланă самант.**

# Хăмăшлăсем çĕнĕ шкул кĕтеççĕ

Кунти вăтам шкул ял варринчи тӳремре ларать. Ăна курсанах ман куç умне хамăрăн кивĕ шкул тухса тăчĕ. Вăл та пĕр хутлă шурă тĕспе сăрланă çуртра вырнаçнăччĕ. Хăмăшлă шкулĕ те çĕнелмен куран. Каярахпа ăна 1969 çултах туса лартнине пĕлтĕм. Паллах, паянхи кун кирлĕ хăтлăхсемпе вăл тивĕçтереймест. Тутарстанри пĕчĕк ялсенче те паян шкулсем икĕ хутлă, кирпĕчрен. Вăтам Хăмăшлăра çĕнĕ шкул çинчен тахçанах ĕмĕтленеççĕ, ачасем хăйсен сочиненийĕсенче çутă та пысăк, илемлĕ шкулта вĕренес килнине пĕлтереççĕ. Шкул проекчĕ те хатĕр ĕнтĕ, çитес çул никĕсне хывса ăна тума тытăнасшăн. Кивĕ шкула та ытла хурлас килмест. Учительсем тăрăшнипе кашни класа ятарлă предмет валли янтăланă. Вестибюлĕн пĕр кĕтессинче пĕчĕк чăваш музейне йĕркеленĕ. Тĕрленĕ алшăллисем, сурпансем, кулленхи пурнăçра усă куракан авалхи япаласен пуçтарнă унта. 124 ача вĕренет Вăтам Хăмăшлă шкулĕнче, çав шутра кӳршĕ ял ачисем те. Чăваш шкулĕ пулсан та ачасем кунта тутар, нимĕç чĕлхисене вĕренеççĕ.



Эпир шкула пырса кĕнĕ чухне шăпах тăхтав пыратчĕ. Ачасем шавлани, класран-класа тусан кăларса чупни, спортзалта мечĕк хăвалани — çакăнта ĕнтĕ шкулăн кулленхи сăн-сăпачĕ, пурнăçĕ. Учительсем те пурте хăйсен пӳлĕмĕнче ларатчĕç. Вĕсем кунта çирĕм иккĕн. Елена Николаевна Петрова завуч каланă тăрăх, вунтăваттăшĕ аслă пĕлӳллĕ, тăваттăшĕ куçăн мар майпа аслă шкулсенче вĕренеççĕ, ыттисем ятарлă вăтам пĕлӳллĕ. Хăмăшлă вĕрентекенĕсем пире ăшшăн кĕтсе илчĕç, анчах вĕсемпе нумай калаçма май пулмарĕ — шăнкăрав янрарĕ те учительсем классене урок ирттерме саланчĕç. Шкулта кăна сасăсем çапла хăварт улшăнаççĕ пуль — часах янраса тăракан сас-чӳ шăпланчĕ. Пӳлĕмре эпир Елена Николаевнăпа тата чăваш чĕлхипе литературипе вĕрентекен Владимир Валериевичпа юлтăмăр. Вĕсем шкул тăрăх пĕчĕк экскурси йĕркелесе ун пурнăçĕ çинчен каласа пачĕç.

— Пирĕн шкула Нурлат районĕнче юлса пыраканнисем хушшине кĕртме çук. Район тата республика олимпиадисенче ачасем вырăс чĕлхипе тата литературипе, историпе, чăваш чĕлхипе малти вырăнсене йышăнаççĕ. Спорт вăйлă аталанать. Вĕрентекенсем ытларах физкультура тата ĕç урокĕсем патне туртăнаççĕ. Халĕ пире пуринчен ытларах преступленисен шучĕ ӳсни, наркомани сарăлни хăратать. Хула çывăххи те пысăк витĕм кӳрет. Эпир хамăр ачасене сыхласа хăварас тесе вăй çитнĕ таран тăрăшатпăр, класс сехечĕсенче калаçусем ирттеретпĕр, — тет Е.Н.Петрова.

Елена Николаевна шкулта 1999 çулта, Елабугăри педагогика институтĕнчен вĕренсе тухсан, ĕçлеме пуçланă. Вырăс чĕлхипе истори урокĕсем илсе пырать. Пултаруллă специалиста асăрхаса тин диплом илнĕ çамрăк хĕре тӳрех завуч вырăнне шанса панă.

— Мухтанмалли те пур пирĕн, — тет савăнăçлăн Елена Николаевна. — Шкулта темиçе çул драма кружокĕ ĕçлет. Спектаклĕсене чăвашла та, вырăсла та лартаççĕ. Района вырăсла спектаклĕпе кайса парнесем илсе таврăнчĕç. Кашни çул аслă шкулсене вĕренме кĕрекенсен шучĕ чакмасăр пĕр шайра пырать. Ачасем кашниех ăста та пулин, кăмăлĕсене кура, вĕренме кĕме ĕмĕтленеççĕ. Пĕлӳ илнĕ çын пурнăçран нумай илме пултарнине ăнланаççĕ вĕсем. Вĕрентӳре пулакан çĕнĕлĕхсенчен те юлмастпăр эпир. Паянхи кун шкулта 7 компьютер, вĕсене пĕр класа пуçтарнă. Вĕрентекен Р.М.Мазитова Нурлатран çӳрет. Компьютер класĕ пурри, сăмахсăрах, вĕренӳ шайне чылай çӳле çĕклет.



Хуçалăх енчен илсен, пирĕн шкулăн хăйĕн пахча пур. Çĕр улмипе, пахча çимĕçпе хамăра тивĕçтеретпĕр. Ыттипе роно, ял хуçалăх управленийĕ пулăшать. Ачасем тӳлевсĕр апатланаççĕ.

— Пирĕн шкул — чăваш шкулĕ. Çавăнпа тăван чĕлхе пирĕншĕн тĕп вырăнта. Ăна кашнин пĕлме тăрăшмалла, — тет çирĕппĕн Владимир Валериевич Петров, чăваш чĕлхипе литература учителĕ. — Эпĕ малтан шкулта завхоз пулса ĕçлерĕм. Анчах ачасене вĕрентес кăмăл пысăкчĕ ман. Вара 1995 çулта Чăваш патшалăх университетне куçăн мар майпа вĕренме кĕтĕм. Ултă çул вĕренсе диплом илтĕм, — каласа парать Владимир Петров.

Вăл учитель ĕçне пусĕпех кĕрсе ӳкни тӳрех курăнать. Хăй предмечĕ çинчен юратса, хавхаланса калаçать.

— Чĕлхепе илемлĕ литературăна вĕрентнисĕр пуçне чăваш халăхĕн йăли-йĕркипе, историйĕпе паллаштаратпăр ачасене. Çын хăй халăхĕн авалхи историне пĕлсен унпа мухтанма тытăнать, хăй çав халăх ывăлĕ е хĕрĕ пулнинчен вăтанма пăрахать, — тет Владимир Валериевич.

Вĕрентĕве туллин илсе пыма Хăмăшлă вăтам шкулне паян чăваш чĕлхипе учебниксем çитмеççĕ. Литература урокĕсене те киввисемпех ирттереççĕ, программа çĕнĕ пулин те.

— Халĕ çырассин çĕнĕ правилисем йĕркене кĕнĕ. Анчах учебниксем кивввине кура ачасем сăмахсене кивĕллех çырнине кураççĕ. Паллах, диктантра та çаплах çыраççĕ. Çавăнпа эпĕ вĕсене йăнăш вырăнне шутламастăп. Тĕрĕсленĕ чухне вара пĕр-пĕр сăмаха епле çырмаллине тепĕр хут вăтанма паратăп, — каласа парать В.В. Петров.

Çак инкек Вăтам Хăмăшлăри вăтам шкулта çеç мар. Нурлат районĕнчи нумай чăваш шкулне пырса тивет ку. Тăван чĕлхене тĕплĕн вĕренейменнипе çамрăк ăру ытларах вырăсла калаçать. Нурлат тăрăхĕнче вара, Тутарстанри ытти районсемпе танлаштарсан, чăваш ялĕсем самай нумайрах. Хулара та кашни утăмрах тенĕ пек чăваша тĕл пулатăн. Анчах Нурлатра паянхи куна вырсарни шкулĕ те çук. Нурлат районĕн вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ В.М.Кашкаров шантарса каланă тăрăх, çитес вăхăтра çак ыйтăва татса памалла.

Çавă лайăх: Хăмăшлă шкулĕнче хăй ĕçне чунĕпе парăннă çамрăк вĕрентекен ĕçлет. Лайăх специалист пурри — çур ĕç, унăн ĕçĕ — тепĕр çурри. Апла чĕлхе аталанăвĕшĕн хăрамалли çук.

**Ирина ГОРДЕЕВА.**
**Сăнӳкерчĕксенче: Е.Петрова; В.Петров.**



## Тав тăватпăр сана, фестиваль!

Иртнĕ çулла Хусантан çула тухнă «Борис Полевой» теплоход çинче регионсем хушшинчи çамрăк корреспондентсен «Ылтăн калем» фестивалĕ 7-мĕш хут иртрĕ. Унта Раççей регионĕсенчен 130 çамрăк корреспондент хутшăнчĕ. Маршручĕ Хусан — Самара — Саратов.

Асăннă фестивале Аксу районĕнчи Емелькинăри вăтам шкул вĕренекенĕ Элина Михайлова тата Савгачевăри чăваш гимназийĕн 11-мĕш класс вĕренекенĕ Валя Яковлева та хутшăнма тивĕç пулчĕç. Вĕсем иккĕшĕ те районта иртернĕ «Ылтăн калем» конкурс çĕнтерӳçисем.

Фестиваль теплоход çинче пилĕк кун пычĕ. Çамрăк корреспондентсем Самара, Саратов хулисемпе паллашрĕç, тĕрлĕрен конкурссене хутшăнчĕç, хайлавсемпе сценарисем çырчĕç, журналистика лаççинче хăйсен ăсталăхне туптарĕç.

Фестивальтен Аксу районĕн çамрăк çыравçисем пушă аллăпа килмерĕç. Элина Михайлова унтан III степеньлĕ диплома таврăнчĕ. Валя Яковлева фестивальтен килсен Чăваш патшалăх университечĕн студенчĕ пулса тăчĕ.

Фестивале хĕрсем тав сăмахĕсемпе çеç аса илеççĕ.

**Андрей МИХАЙЛОВ.**
**Аксу районĕ,**
**Емелькинăри вăтам шкул.**
**Автор сăнӳкерчĕкĕнче: «Ылтăн калем» фестивале хутшăннă Валя Яковлевăпа Элина Михайлова çамрăк корреспондентсем.**